йӳçĕ (тутлă) чуста, çĕр улми крахмалĕ, грек мăйăрĕ, арахис мăйăрĕ, шĕшкĕ мăйăрĕ, кедр мăйăрĕ, тутлă пăрăç, хура пăрăç, аш рассольникĕ, груша компочĕ, шăратнă сыр, чăмламалли резинка, çăра чей, симĕс чей, йӳçĕтнĕ купаста (пан улми);

чуста хур, чуста хăпарнă, чей пĕçер, консервла, пăрăçла, хĕрхӳлен (тĕслĕх, çу), чĕлхӳне çăтан! (питĕ тутлă);

кĕрпек, сĕтек, таварак, хĕрхӳ (апат), шывак (сĕт, кĕсел).

**Сут çанталăкпа, йĕри-тавралăхпа çыхăнакан сăмахсем:** Алтăр çăлтăр, Шурăм пуç çăлтăрĕ, тӳпе, Сурçĕр çăлтăрĕ, лачака, океан, континент, тӳремлĕх, вулкан, материк, полюс, тундра; юшкăнлă, шурлăхлă, лачакаллă.

**ӳсен-тăран ячĕсем:** ама хупахĕ, шăнăр курăкĕ, тал пиçен, ут куçĕ, хăяр ути, куян купăсти, алоэ, кактус, йуçĕ курăк, ниш курăкĕ (лангаш), шапа пăтти, сарă чăпăл курăкĕ, шыв лилийĕ, шыв курăк (водоросли).

**Тискер кайăк ячĕсем:** жираф, дельфин, кит, крокодил, морж, ондатра, песец, пурăш, сăвăр, тюлень, хăнтăр, шашка, шăши, юс; ондатра тирĕ, сăсар çуха.

**Хурт-кăпшанк**ă **ячĕсем:** ăман, вăрăм туна, кăпшанкă, кăткă, кĕве, лĕпĕш, нăрă, пăван, сăвăс, сăвăслан, сăпса, сĕлĕх, таракан, уяр, хăнкăла, хурт, шăна, шăрчăк, шĕвĕрĕлчен, шĕкĕ, эрешмен; хурт-кăпшанкă, хурт- хăмăр, шăна-пăван, личинка, вĕлле хурчĕ, кăткă тĕми, кĕве хурчĕ, купăста лĕпĕшĕ, лĕпĕш хурчĕ, тислĕк нăрри, шыв нăрри, сăпса йăви, тĕкĕл тура йăви, сарă хурт, хурт ами, шăрчăк, эрешмен карти.

**Чĕлхене ансат тишкересси**

Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе паллашасси. Самах пулавĕ. Аффикссем хушăнса çĕнĕ сăмахсем пулни. Хутлă сăмахсем. Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани.

**Япала ячĕ.** ӳкĕмсем (падежсем). Текстри, предложенири япала ячĕсем мĕнле падежрине вĕсен ыйтăвĕсем тăрăх пĕлесси. Хупă сасăпа *(юлташ, телей, сунар, пĕлĕт, хĕвел, кун)* тата [а], [э], [а], [ĕ], [у], [у], [и] сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ.

**Сăпат ылмашĕсене** текстра тупасси, вĕсем хаш падежрине палăртасси.

**Глагол** вăхăт, сăпат тата хисеп тăрăх улшăнни. Унăн пурлă тата çуклă формисем.

**Паллă ячĕсен** тĕп, танлаштаруллă тата вăйлă степенĕсем, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Паллă ячĕсем *-ак/-ск, -ак/-ск, -кан/-кĕн, -чан/-чĕн, -ла/-лĕ* аффикссем хушăнса пулни.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси.** Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йӳçĕ).* Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.*

**Предложени.** Предложении пĕр йышши членĕсем. Вĕсем пĕтĕçтерӳпе (союзпа) *(анчах, çапах, тата, та(те)* тата пĕтĕçтерӳсĕр (союзсăр) çыхăнни.

Пĕр йышши членлă предложенисем тума пĕлесси.

**Орфографи** тата **орфоэпии**

Машар самахсене сырасси: сетел-пукан, сет-су. Ике хут калакан самахсене сырасси:ял-ял, херле-херле, пин-пин.. 1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене *л, н, т* саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртасси: *выльăх, кукăль, супăнь, мăкăнь, халь, ахаль, мăкăль, шукăль; ларать, вылять, чупать, тăрăшать.*

2) Уйăракан çемçелĕх палли *(ь)* çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья, Марье.*

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм,аппа, кукка, мăн акка;*

çупталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатри глаголсен формисенче: *вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.*

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

5) Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, Атăл, Сĕве.*

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *а)*

*Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*

*а) машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолăт, ракета;*

*б) парта, учитель, директор;*

*в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор;*

*г) кухня, стакан, щăтка.*

Мăшăр сăмахсене çырасси: *сĕтел-пукан, сĕт-çу.*

Икĕ хут калакан самахсене çырасси: *ял-ял, хĕрлĕ- хĕрлĕ, пин-пин.*

***Сăпат ылмашĕсене*** *тĕрĕс каласси, çырасси:* эпĕ (эп), эсĕ (эс), эпир (эпĕр), эсир (эсĕр); манăн (ман), санăн (сан); манра, манран, санра, санран, пирĕнте (пирте), сирĕнтен (сиртен); вăл унăн, ăна, унран.

*Япала ячĕсен падеж формисене тĕрĕс çырасси:* çыру - çырăвăн, çырăва; сăвă - сăввăн, сăвва; пĕрчĕ - пĕрчĕн, пĕрче; мăкăнь - мăкăньте *е* мăкăньре; район - районта *е* районра.

**Глаголăн çак формисене** тĕрĕс каласси, çырасси:

1) *хальхи вахатăн сапат формисене* (çыратăп - çырмастăп, çыратăн - çырмастăн (çырап - çырмап, çыран *мар,* ташлатпăр - ташламастпăр, ĕçлетпĕр - ĕçлсместпĕр, вулатпăр - вуламастпăр, вĕренетпĕр - вĕренместпĕр, ташлатăр - ташламастăр, ĕçлетĕр - ĕçлеместĕр, вĕренетĕр - вĕренместĕр, килетĕр - килместĕр, çырать - çырмасть (çырат - çырмас *мар);*

2) *пулас вăхăт формисене* (ту - тăвăп, тăвăн, тăвĕ; çи - çийĕн, çийĕп, çийĕ);

3) [р] сасăпа пĕтекен *йĕр, кĕр, кур, пар, пер, пыр, тар, хур, яр* глаголсен иртнĕ вăхăт формисене: *кĕтĕм, кĕтĕн, кĕчĕ, кĕтĕмĕр* ([р] сасă тухса ÿкет).

çемçе [л'], [н'], [т'] сасăсемпе пĕтекен сăмах тĕпĕ çумне *-ла(-лĕ)* аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче *ь* çырасси: *кукальлĕ, супаньлĕ, тетрадьлĕ, медальлĕ, портфельлĕ.*

***Паллă ячĕсен вăйлă степенĕнче*** (хуп-хура, тÿп-тÿрĕ, ем-ешĕл, çап-çутă, сап-сарă, кăн-кăвак) *дефис лартасси.*

**Пунктуаци.** Пĕр йышши членлă предложенисенче хÿреллĕ пăнчă лартасси.

**Таса та илемлĕ çырасси.** Графика хăнăхăвĕсене малалла аталантарса пырасси. Сăмахсемпе предложенисене хăвăртрах çырма хăнăхтарасси. (Кирлĕ сăмахсемпе предложенисене учитель хай суйласа илет.)

**ЧӐВАШ ЧӖЛХИ УРОКӖСЕН ТЕМАТИКА ПЛАНӖ.**

**1 КЛАСС**

| | **Раздел, урок теми** | **Сех.шуч.** |
|---|---|---|
| | **Вулама – çырма вӗрентес умӗнхи тапхӑр.** | **12.** |
| 1. | Шкула. | 1 |
| 2. | Класра (урокра). Калаври предложенисене уйӑрни. | 1 |
| 3. | Теттесемпе вӑйӑсем. Предложенири чарӑну паллисем. | 1 |
| 4. | Шкул ачин кун йӗрки. Калав. | 1 |
| 5. | Тӑван кил-çурт. Предложенири сӑмахсен хисепӗ. | 1 |
| 6. | Çемье (кил-йыш). Предложенири сӑмахсен йӗрки. | 1 |
| 7. | Килти выльӑх- чӗрлӗх. Сӑмахри сыпӑксем. | 1 |
| 8. | Улма-çырла. Пахча çимӗç. Сӑмахри сыпӑксен хисепӗ. Пусӑм. | 1 |
| 9. | Уй-хирти тыр-пул. Уçӑ сасӑ. | 1 |
| 10. | Вӑрманти чӗр чунсем. Уçӑ тата хупӑ сасӑсем. | 1 |
| 11. | Ӳт-пӳ пайӗсем. Уçӑ тата хупӑ сасӑсем. | 1 |
| 12. | «Çарӑк» юмах. | 1 |
| | **Вулама-çырма вӗренмелли тапхӑр.** | **86** |
| 13. | Уçӑ сыпӑк. [А] сасӑ тата унӑн сас паллисем | 1 |
| 14. | Уçӑ сыпӑк. [У] сасӑ тата унӑн сас паллисем. | 1 |
| 15. | Уçӑ сыпӑк. [А], [у] сасӑсем тата вӗсен паллисем. | 1 |
| 16. | Уçӑ сыпӑк. | 1 |
| 17. | Тӳнтер сыпӑк. [Н] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 18. | Тӳнтер сыпӑк. [Н] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 19. | Тӳнтер сыпӑк. [Ӑ] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 20. | Тӳрӗ сыпӑк. [Ӑ] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 21. | Тӳнтер сыпӑк. [Л] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 22. | Тӳрӗ сыпӑк. [Л] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 23. | Тӳнтер сыпӑк. [Х] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 24. | Тӳрӗ сыпӑк. [Х] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 25. | Тӳнтер сыпӑк. [М] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 26. | Тӳрӗ сыпӑк. [М] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 27. | Тӳнтер сыпӑк çинчен вӗреннине пӗтӗмлетни. | 1 |
| 28. | Тӳрӗ сыпӑк. Вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетни. | 1 |
| 29. | [Р] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 30. | Хупӑ сыпӑк. [Р] сасӑпа унӑн  паллисем. | 1 |
| 31. | Хупӑ сыпӑк. | 1 |
| 32. | Хупӑ сыпӑк | 1 |
| 33. | [Ш] сасӑ тата унӑн  паллисем | 1 |
| 34. | [Ш] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 35. | [Ы] сасӑ тата унӑн паллисем | 1 |
| 36. | [Ы] сасӑ тата унӑ   паллисем. | 1 |
| 37. | [В] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 38. | [В] сасӑ тата унӑн   паллисем. | 1 |
| 39. | Уçӑ, тӳнтер, тӳрӗ, хупӑ сыпӑксем. | 1 |
| 40. | [С] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 41. | [Ç] сасӑ тата унӑн паллисем | 1 |
| 42. | [С], [ç] сасӑсемпе вӗсен   паллисем. | 1 |
| 43. | [П] сасӑ тата унӑн паллисем. | 1 |
| 44. | [П] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 45. | [И] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 46. | [И] сасӑ тата унӑн  паллисем. | 1 |
| 47. | [Т], [т'] сасӑсем тата вӗсен  паллисем. | 1 |
| 48. | [Т], [т'] сасӑсем тата вӗсен  паллисем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 49. | [К], [к'] сасăсем тата вĕсен  паллисем. | 1 |
| 50. | [К], [к'] сасăсем тата вĕсен паллисем. | 1 |
| 51. | [Э] сасă тата унăн  паллисем. | 1 |
| 52. | Е сас паллин [э] сасă пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 53. | Е сас паллин [э] сасă пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 54. | Виçĕ сасăллă (УХХ) сыпăк. | 1 |
| 55. | [Ĕ] сасă тата унăн паллисем. | 1 |
| 56. | [Ĕ] сасă тата унăн   паллисем. | 1 |
| 57. | [Ÿ] сасă тата унăн паллисем. | 1 |
| 58. | [Ÿ] сасă тата унăн  паллисем. | 1 |
| 59. | [Ч] сасă тата унăн   паллисем | 1 |
| 60. | [Ч] сасă тата унăн   паллисем. | 1 |
| 61. | Çемçелĕх палли (ь). | 1 |
| 62. | Çемçелĕх палли (ь). | 1 |
| 63. | [Й] сасă тата унăн   паллисем. | 1 |
| 64. | [Й] сасă тата унăн   паллисем. | 1 |
| 65. | Е сас паллин [йэ] сасăсен пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 66. | Е сас паллин пĕлтерĕшĕсем. | 1 |
| 67. | Тăватă сасăллă (ХУХХ) сыпăк. | 1 |
| 68. | Тăватă сасăллă (ХУХХ) сыпăк. | 1 |
| 69. | Ю сас паллин [йу] сасăсен пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 70. | Ю сас паллин [у] сасă пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 71. | Ю, ÿ сас паллисем. | 1 |
| 72. | Я сас паллин [йа] сасăсен пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 73. | Я сас паллин [а] сасă пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 74. | [А], [у], [э] сасăсен сас паллисем. | 1 |
| 75. | Уйăракан паллă (ь). | 1 |
| 76. | Уйăракан паллă (ь). | 1 |
| 77. | Тăватă сасăллă (ХХУХ) сыпăк. | 1 |
| 78. | [О] сасă тата унăн паллисем. | 1 |
| 79. | Виçĕ сасăллă (ХХУ) сыпăк. | 1 |
| 80. | Ă сас паллин икĕ пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 81. | Ă сас паллин икĕ пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 82. | [Б], [б'] сасăсем. Б, б  паллисем. | 1 |
| 83. | [Б], [б'] сасăсем. Б, б  паллисем. | 1 |
| 84. | [Г], [г'] сасăсем. Г, г паллисем. | 1 |
| 85. | [Г], [г'] сасăсем. Г, г паллисем | 1 |
| 86. | [Д], [д'] сасăсем. Д, д  паллисем. | 1 |
| 87. | [Д], [д'] сасăсемпе вĕсен  паллисем. | 1 |
| 88. | [Ж] сас, Ж, ж сас паллисем. | 1 |
| 89. | [Ж] сас, Ж, ж сас паллисем. | 1 |
| 90. | [З], [з'] сасăсем. З, з сас паллисем. | 1 |
| 91. | [З], [з'] сасăсем. З, з сас паллисем. | 1 |
| 92. | [Ф], [ф'] сасăсем. Ф, ф сас паллисем. | 1 |
| 93. | [Ф], [ф'] сасăсем. Ф, ф сас паллисем. | 1 |
| 94. | [Ц] сасă. Ц, ц сас паллисем. | 1 |
| 95. | [Ц] сасă. Ц, ц сас паллисем. | 1 |
| 96. | [Щ] сасă. Щ, щ сас паллисем. | 1 |
| 97. | [Щ] сасă. Щ, щ сас паллисем. | 1 |
| 98. | Хытăлăх палли (Р) | 1 |
| | **Вулама-çырма вĕрентнĕ хыççăнхи тапхăр.** | **34** |
| 99. | И.Я.Яковлев. Çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 100. | И.Я.Яковлев. Çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 101. | А.Г.Николаев. Çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 102. | А.Г.Николаев. Çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 103. | Чăваш çĕршывĕ. Çекĕллĕ пысăк сас паллисем. | 1 |
| 104. | Çут çанталăк. Тӳрĕ йĕрлĕ сас паллисем (К, н, п, р, т, ф) | 1 |
| 105. | Хĕлле.Тӳрĕ йĕрлĕ сас паллисем (К, н, п, р, т, ф). | 1 |
| 106. | Çуркунне. Тӳрĕ йĕрлĕсас паллисем (А, ю, Т ). | 1 |
| 107. | Çулла. Йăлăллă тӳрĕ йĕрлĕ сас паллисем (у, ц, ç, д, щ, в). | 1 |
| 108. | Кĕркунне. Йăлăллă тӳрĕ йĕрлĕ сас паллисем (А, Ă, Б, В, Д, К, Ю,Ç, Н, Ц, Щ). | 1 |
| 109. | Çĕрле. Ирхине. Икĕ вĕçлĕ çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 110. | Кăнтăрла. Икĕ вĕçлĕ çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 111. | Каçхине. Авăнчăк чалăш йĕрлĕ сас паллисем. | 1 |
| 112. | «Юратнă анне». Авăнчăк чалăш йĕрлĕ сас паллисем. | 1 |
| 113. | "Аттепе анне". Пушмакĕ ывăннă". Авăнчăк чалăш йĕрлĕ сас паллисем | 1 |
| 114. | «Асанне» Çурма ункăллă сас паллисем. | 1 |
| 115. | «Асанне е кукамай» Çурма ункăллă сас паллисем. | 1 |
| 116. | «Шăллăм улталанни». Çурма ункăллă сас паллисем. | 1 |
| 117. | «Чĕрĕп». «Чĕкеç».Ункăллă сас паллисем. | 1 |
| 118. | Чăх чĕпписем. Ункăллă сас паллисем. | 1 |
| 119. | «Кишĕр-мишĕр» Икĕ вĕçлĕ çекĕллĕ сас паллисем | 1 |
| 120. | «Автанпа тилĕ» Ункăлă сас паллисем. | 1 |
| 121. | «Тилĕпе шăши çури».Йăлăллă çекĕллĕ сас паллисем. | 1 |
| 122. | «Ниме». «Чакакпа чĕппи». ÇТ ĕçлени. Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 123. | Пĕтемлету ĕçĕ. Çырса илни. «Шкула кайнă чух», «Тав». . | 1 |
| 124. | «Эп хамах. «Чи тутли". Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 125. | «Урамра». Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 126. | Çуралнă кун. «Кентти ӳкерет . Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 127. | «Ӳссен эсĕ кам пулан?» Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 128. | «Икĕ çирĕм пус». «Çĕр çырли». | 1 |
| 129. | «Мĕн тума юрамасть»? Ĕлкине кура сас паллисене ушкăнлани. | 1 |
| 130. | «Таня кĕнеке вулать». «Вĕрентĕм вулама». «Кушак çури». ÇТ ĕçлени. Çырма пĕлнине тĕрĕслени. | 1 |
| 131. | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 132. | Пĕтĕмлетӳ урокĕ. «Сывă пул, Чăваш азбуки!» | 1 |

**2 КЛАСС**

| № | Тема | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | **1-мĕш класра вĕреннине аса илни** | 4 |
| 1,2,3 | Предложени, сăмах: сасă: сас палли. | 3 |
| 4 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни «Унăн юлташĕ – сунчăк» | 1 |
| | **Сасă тата сас палли** | 25 |
| 5 | Алфавит. | 1 |
| 6 | «Кĕркунне» темăпа калав çырасси. | 1 |
| 7 | Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. | 1 |
| 8 | Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем. | 1 |
| 9,10 | Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем | 2 |
| 11 | Сывлăх сунасси. Сывпуллашасси. | 1 |
| 12 | Творчество ĕçĕ. Сывлăх сунмалли: сывпуллашмалли сăмахсене усă курса диалог çырасси | 1 |
| 13 | Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 14 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант «Çил мĕнле пулать?» | 1 |
| 15 | Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси. | 1 |
| 16,17 | Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. | 2 |
| 18 | Изложени «Ăшă чух». | 1 |
| 19 | Тăванлăх-хурăнташлăх сăмахĕсем. | 1 |
| 20,21 | Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш -пĕр сăмахсене çырасси. | 1 |
| 22,23 | Орфографи словарĕ. | 2 |
| 24,25 | Сăмах сыпăкĕ. | 1 |
| 26 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант «Пыл хуçисем» | 1 |
| 27,28 | Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. | 2 |
| 29 | Ыйтусене хуравласа ўкерчĕк тăрăх калав çырасси. | 1 |
| | **Сăмах. Япала ячĕ.** | 18 |
| 30,31 | Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем. | 2 |
| 32 | Текст. | 1 |
| 33 | Кам? Мĕн? ыйтуллă сăмахсем | 1 |
| 34 | Çыхăнуллă пуплев. 136– мĕш хăнăхтару тăрăх калав туни. | 1 |
| 35 | Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем | 1 |
| 36 | Япала нумайине пĕлтерекен сăмахсем | 1 |
| 37 | Тĕрĕслев ĕçĕ . Диктант. | 1 |
| 38,39 | Çын ятне, хушаматне, ашшĕ ятне пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси | 2 |
| 40 | Паллашу сăмахĕсем | 1 |
| 41,42 | Выльăх - чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси | 2 |
| 43 | Ўкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси | 1 |
| 44 | Çырса илни. Кампур. | 1 |
| 45,46 | Хула, ял, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси | 2 |
| 47 | Пĕлтерў çырасси | 1 |
| | **Глагол?** | 20 |
| 48- 52 | Мĕн тăвать? Мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсем. | 5 |
| 53 | Ўкерчĕксем тăрăх план туса калав çырасси. | 1 |
| 54-57 | Мĕн турĕç? Мĕн турĕ? ыйтури глаголсем. | 4 |
| 58 | Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. Çăлтăрсем чĕнеççĕ. | 1 |
| 59 | Ыйтусене хуравласа пĕчĕк калав çырасси. | 1 |
| 60-64 | Хирĕçле тата пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ глаголсем. | 5 |
| 65 | Тав тăвасси. | 1 |
| 66 | Çырса илни. Надежда Павлова. | 1 |
| 67 | Ўкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси. | 1 |
| | **Паллă ячĕ** | 15 |

| | | |
|---|---|---|
| 68,69, 70 | Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. | 3 |
| 71 | Диктант Ирхине. | 1 |
| 72,73 | Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. | 2 |
| 74 | Изложени. Йытапа унăн мелки. | 1 |
| 75 | Çынна сăнлакан самахсем | 1 |
| 76,77 | Çыру çырасси | 2 |
| 78,79 | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем) | 2 |
| 80,81, 82 | Пĕрешкел пĕлтерĕшлĕ паллă ячесем (синонимсем) | 3 |
| | **Предложени** | 13 |
| 83,84, 85 | Пуплеве предложенисем çине уйарасси | 3 |
| 86,87, 88 | Предложенин тĕп членесемпе кĕçĕн членесем | 3 |
| 89 | Сочинени. Çуркунне çывхарать. | 1 |
| 90, 91 | Предложенин тĕп членесемпе кĕçĕн членĕсем | 2 |
| 92,93 | Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну | 2 |
| 94 | Тĕрĕслев диктанчĕ. Йытă çури. | 1 |
| 95 | Изложени. Чĕрĕп. | 1 |
| | **2- мĕш класра вĕреннине пĕтемлетесси.** | 7 |
| 96, 97 | Калуллă, ыйтуллă предложенисем. Кăшкăруллă предложенисем. | 2 |
| 98 | Сасăсемпе сас паллисем, алфавит çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. | 1 |
| 99 | Япала ячĕ, глагол тата паллă ячĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси | 1 |
| 100 | Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетесси | 1 |
| 101 | Тĕрĕслев диктанчĕ | 1 |
| 102 | Пĕтемлетӳ урокĕ. Предложени çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси | 1 |

**3 КЛАСС**

| | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | **Пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕреннине аса илесси (6сех)** | |
| 1. | 1-мĕш,2-мĕш классенче вĕреннине аса илесси. Текст. | 1 |
| 2. | Предложени. | 1 |
| 3. | Сăмах.Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни. «Пурăш çурисем». | 1 |
| 4. | Сасăсемпе сас палисем | 1 |
| 5. | Сасăсемпе сас палисем | 1 |
| 6. | ÿкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси. | 1 |
| | **Саса, сас палли (22 сех)** | |
| 7. | Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси | 1 |
| 8. | Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси | 1 |
| 9. | Диктант. Авăн уйахĕ. | 1 |
| 10. | Ч сасă умĕнчи *л ,н* хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни | 1 |
| 11. | Ч сасă умĕнчи *л ,н* хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни | 1 |
| 12. | Изложени.Пиччĕшĕпе шăллĕ. | 1 |
| 13. | Сăпайлăх сăмахĕсем | 1 |
| 14. | *Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси. | 1 |
| 15. | *Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси. | 1 |
| 16. | *Ç, ч* сас паллисем хыççăн *ы* е *и* çырасси. | 1 |
| 17. | Калав содержанине кĕскен çырасси. | 1 |
| 18. | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, сас паллисем çырасси. | 1 |
| 19. | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, сас паллисем çырасси. | 1 |
| 20. | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, сас паллисем çырасси. | 1 |
| 21. | Телефонпа калаççасси. | 1 |
| 22. | Изложени .Çăкăр. | 1 |
| 23. | Э е ю я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. | 1 |
| 24. | Э е ю я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. | 1 |
| 25. | Э е ю я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. | 1 |
| 26. | Э е ю я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. | 1 |
| 27. | Тĕрĕслев ĕçĕ.Диктант. Туслăх . | 1 |
| 28. | Библиотекăран илнĕ кĕнекесен списокне тăвасси | 1 |
| | **Предложени ( 26сех)** | |
| 29. | Сочинени. Хура кĕркунне. | 1 |
| 30. | Предложени . Предложени çинчен мĕн пĕлнине аса илесси | 1 |
| 31. | Текст тата предложени. | 1 |
| 32. | Калуллă предложенисем. | 1 |
| 33. | Калуллă предложенисем. Диктант . Çерçисем. | 1 |
| 34. | Ыйтуллă предложенисем. | 1 |
| 35. | Хистевлĕ предложенисем. | 1 |
| 36. | Изложени. Ватă тилĕ. | 1 |
| 37. | Кăшкăруллă предложенисем. | 1 |
| 38. | Предложенин тĕп членĕсем. | 1 |
| 39. | Предложенин тĕп членĕсем. | 1 |
| 40. | Предложенин кĕçĕн членĕсем. | 1 |
| 41. | ÿкерчĕк тăрăх текст çырасси. | 1 |
| 42. | Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнавĕ. | 1 |
| 43. | Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнавĕ. | 1 |
| 44. | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 45. | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 |
| 46. | Ансăр тата анлă предложенисем. Диктант. Кăмпа çумарĕ.тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| 47. | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 |
| 48. | Пĕр-пĕр чĕр чуна сăнласа текст çырасси. | 1 |
| 49. | Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. | 1 |
| 50. | Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. | 1 |
| 51. | Тăванлăх сăмахĕсем. | 1 |
| 52. | Тăванлăх сăмахĕсем. | 1 |
| 53. | Тăванлă х сăмахĕсем. Çырса илни. Ват асатте уявĕ. | 1 |
| 54. | Сочинени. Манăн асатте(асанне) | 1 |
| | **Сăмах(13сех)** | |
| 55. | Сăмах. Сăмах тытамĕ .Тымар тата аффикссем. | 1 |
| 56. | Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем. | 1 |
| 57. | Хăнана чĕнесси. | 1 |
| 58. | Çĕнĕ сăмахсем –çă,çĕ -лăх,лĕх аффикссем хушăнса пулни. | 1 |
| 59. | Çĕнĕ самахсем -у(ÿ) –лă (лĕ) аффикссем хушăнса пулни. | 1 |
| 60. | Изложени. Чаплă утарçă. | 1 |
| 61. | Пĕр тымартан пулнă сăмахсем. | 1 |
| 62. | Диктант. Тутлă шăршă.Тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| 63. | Аффикслă сăмахсене çырасси. | 1 |
| 64. | Аффикслă сăмахсене çырасси. | 1 |
| 65. | Аффикслă сăмахсене çырасси. | 1 |
| 66. | Аффикслă сăмахсене çырасси. | 1 |
| 67. | Заметка çырасси | 1 |
| | **Пуплев пайĕсем .Япала ячĕсем** | 9 |
| 68. | Пуплев пайĕсем Япала ячĕ . | 1 |
| 69. | Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăв ĕсем | 1 |
| 70. | Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăв ĕсем | 1 |
| 71. | Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни. | 1 |
| 72. | Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни. | 1 |
| 73. | Изложени. Каюра. | 1 |
| 74. | Ш ,с сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси. | 1 |
| 75. | Ш ,с сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси. | 1 |
| 76. | Диктант .Сивĕ Мучи.Тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| | **Глагол (17 сех)** | 17 |
| 77. | Глагол .Глагол пĕлтерĕшĕ ыйтăвĕсем. | 1 |
| 78. | Глагол .Глагол пĕлтерĕшĕ ыйтăвĕсем. | 1 |
| 79. | Хирĕçле пĕлтерешлĕ глаголсем. | 1 |
| 80. | Зоопаркра. Калава вĕçлесси. | 1 |
| 81. | Çывăх пĕлтерешлĕ глаголсем. | 1 |
| 82. | Çывăх пĕлтерешлĕ глаголсем. | 1 |
| 83. | Глагол улшăнăвĕ | 1 |
| 84. | Глагол улшăнăвĕ | 1 |
| 85. | Хальхи вăхăт | 1 |
| 86. | Хальхи вăхăт | 1 |
| 87. | Изложени. Алăсем. | 1 |
| 88. | Иртнĕ вăхăт | 1 |
| 89. | Иртнĕ вăхăт | 1 |
| 90. | Диктант. Ир тухакан кăмпасем.Тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| 91. | Пулас вăхăт. | 1 |
| 92. | Пулас вăхăт. | 1 |
| 93. | ÿкерчĕк тăрăх калав туса çырасси. | 1 |
| | **Паллă ячĕ** | 9 |
| 94. | Паллă ячĕ.Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ , ыйтăвĕсем. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 95. | Паллă ячĕ.Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ ,ыйтăвĕсем .Паллă ячĕ улшăнни. | 1 |
| 96. | Паллă ячĕ япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. | 1 |
| 97. | Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем. | 1 |
| 98. | Çулĕпе аслăрах çынсене хисеплесе чĕнесси.Пĕтĕмлетӳ ĕçĕ.Диктант. | 1 |
| 99. | ӳкерчĕк тăрăх калав туса çырасси. | 1 |
| 100. | Хирĕç пĕлтерешлĕ паллă ячĕсем. | 1 |
| 101. | Сасăсемпе сас паллисем. Диктант. Шуршăл ялĕ.Тĕрĕслев ĕçĕ. | 1 |
| 102. | Виççĕмĕш класра вĕреннине пĕтĕмлетесси. | 1 |

**4 КЛАСС - 68 сех.**

| № | Урок теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| | **Вĕреннине аса илни** | ***5*** |
| 1-2 | Савнă çĕр, чăваш çĕр-шывĕ. Сăмах. Предложени. Текст | *2* |
| 3 | **Тĕрĕслев ĕçĕ. Çырса илни.** Сăмах. Предложени. Текст. | *1* |
| 4-5 | Сасăсем тата сас паллисем. Сыпăк, пусăм. | *2* |
| | **Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ** | ***5*** |
| 6 | Пĕр тымарлă сăмахсем. | *1* |
| 7 | Сăмах аффикс хушăннипе пулни. | *1* |
| 8 | Сăмах аффикс хушăннипе пулни. Диктант. «Ырă кăмăл». | *1* |
| 9 | Мăшăр сăмахсем. Сăмахсене икĕ хут калани. | *1* |
| 10 | ***Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант.*** | *1* |
| | **Текст** | ***5*** |
| 11-13 | Текстри предложенисен килĕшĕвĕ. Текст теми. | *3* |
| 14 | Текстăн тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ. | *1* |
| 15 | Текстăн тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ. *Изложени. «Сахăр»* | *1* |
| | **Предложенин пĕр йышши членĕсем** | ***6*** |
| 16 | Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарни. | *1* |
| 17-18 | Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем. | *2* |
| 19-20 | Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем. | *2* |
| 21 | ***Тĕрĕслев ĕçĕ.*** Диктант. «Мулкачсем». | *1* |
| | **Пуплев пайĕсем <u>Япала ячĕ</u>** | ***8*** |
| 22-23 | Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Падежсем. | *2* |
| 24-25 | Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. | *2* |
| 26 | Уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. | *1* |
| 27 | *Изложени. «Пăчи».* | *1* |
| 28 | Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçлени. | *1* |
| 29 | Япала ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. **Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Шăллăм».** | *1* |
| | **Паллă ячĕ** | **9** |
| 30-31 | Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ, пулăвĕ. | 2 |
| 32-34 | Паллă ячĕсен тĕп тата танлаштаруллă степенĕсем. | 3 |
| 35-36 | Паллă ячĕсен вăйлă степенĕ. | 2 |
| 37-38 | Паллă ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. Диктант. «Юман» | 2 |
| | **<u>Хисеп ячĕ</u>** | 5 |
| 39-42 | Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ. | 1 |
| 43 | ***Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант. «Кампур».*** | 1 |
| | **<u>Местоимени</u>** | **6** |
| 44-46 | Местоимени пĕлтерĕшĕ. Сăпат местоименийĕсем. | 3 |
| 47- | Сăпат местоименийĕсем. Диктант «Эпир туслă». | 2 |

| | | |
|---|---|---|
| 48 | | |
| 49 | ***Тĕрĕслев ĕçĕ. Изложени «Вăрмана кам лартать».*** | 1 |
| | **<u>Глагол</u>** | **19** |
| 50-53 | Глаголăн пурлă тата çуклă формисем. | 4 |
| 54-56 | Глагол вăхăт тăрăх улшăнни. Хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ | 3 |
| 57-59 | Иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ. | 3 |
| 60-61 | Пулас вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ. | 2 |
| 62 | Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. | 1 |
| 63 | **Тĕрĕслев ĕçĕ. Диктант «Хĕвел».** | 1 |
| 64 | Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. | 1 |
| 65-68 | Вĕреннине пĕтĕмлетни. | 4 |

## ВĚРЕНЕКЕНСЕН ÇЫХĂНУЛЛĂ ПУПЛЕВНЕ, ÇЫРУ ХĂНĂХĂВĚСЕНЕ, ЧĚЛХЕНЕ ТИШКЕРМЕ ПĚЛНИНЕ ХАКЛАССИ

**Сăмахпа каласа хуравланине хакламалли виçесем.**

Сăмахпа каласа хуравлаттарни пуçламăш классенчи ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хакламалли чи кирлĕ мелсенчен пĕри. Хуравăн çак енĕсене шута илмелле:

а) вĕреннĕ материала туллин тата тĕрĕс каласа пани;

ă) материала ăнланнин шайĕ;

б) йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пани, пуплев культури.

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача программăри материала ăнланса, туллин, тĕрĕс пĕлнине кăтартать, хăй каланине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать; сăмахсемпе предложенисене хăй тĕллĕн тата тĕрĕс тишкерет, вĕрентъăĕ сĕннĕ текстра халиччен вĕреннĕ грамматика пулăмĕсене, сăмахсене мĕнле çырмаллине, предложенири чарăну паллисен сăлтавне тĕрĕс ăнлантарать: йĕркипе, çыхăнуллă каласа хуравлать, пуплев йăнăшĕсем пачах тумасть е 1 йăнăшран ытла тумасть пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен хуравĕ «5» паллăпа хакламалли виçесене тивĕçтерет, анчах вăл правилăсене çирĕплетме илнĕ тĕслĕхсенче 1–2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех е вĕрентъçĕ пулăшнипе çăмăллăнах търлетет; каласа панă чух 1–2 пĕчĕк йăнăш тăвать пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материала пĕтĕмĕшле ăнланать, анчах туллин хуравлаймасть, вĕрентъçĕ пулăшнипе каласа пама пултарать; текста тишкернĕ чух уйрăм йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентъçĕ ыйтусем панипе çеç търлетет; правилăсене харкам тĕллĕн тĕслĕхсемпе çирĕплетсе параймасть, ку ĕçе вĕрентъçĕ хушма ыйтусем парсан çеç пурнăçлайрать; çыхăнуллă каласа параймасть, каласа панă чух темиçе йăнăш тăвать пулсан.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материала пĕтĕмпех е унăн чи кирлĕ пайне пĕлмест, каласа панă тата текстпа ĕçленĕ чухне пысăк йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентъçĕ пулăшнипе те търлетеймест пулсан.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача вĕреннĕ материала пачах та пĕлмест пулсан.

Вĕреннĕ тĕп правилăсемпе тата теори материалĕпе çыхăннă хăнăхтарусенче тунă йăнăшсем уйрăмах пысăк йăнăшсем шутланаăăĕ. Вĕсен шутне правилăсене ăнланмасăр, чуххăмăн каласа пани, хăйсен тĕслĕхĕсемпе çирĕплетменни, калаçпа çырура усă курма пĕлменни кĕреççĕ.

Паллаштарас тĕллевпе çеç программăна кĕртнĕ материала ача мĕнле пĕлнине тĕрĕслесе хаклама кирлĕ мар.

**Ăыру ĕçĕсене (таса та илемлĕ çырни, диктант) хакламалли виçесем**

Ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене кулленхи тата пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсем ирттерсе хакламалла.

**1 класра** ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хăнăхтарусем пурнăçлаттарса куллен тĕрĕслесе тăмалла. Букварь тапхăрĕнчи çыру ĕçĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Пĕрисем – вĕреннĕ пĕчĕк тата пысăк саспаллисене, сыпăксене, ансат, кĕске предложенисене ал çырăвне евĕрлесе пăхса çырасси. Ку çыру ĕçĕсем ытларах чухне «Ḉыру тетрачĕпе» ĕçлессипе çыхăнаççĕ. Теприсем – пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, текстсене ал çырăвне куçарасси. Кун пек тĕрĕслемелли çыру ĕçĕсем 1-мĕш–3-мĕш чĕрĕксенче пĕрер, 4-мĕш чĕрĕкре иккĕ ирттермелле.

**1- 4 классенче** куллен тата пĕтĕмĕшле ирттермелли тĕрĕслев çыру ĕçĕсем шутне çырса илни, тĕрлĕрен диктант (вĕсемпе пĕрлех пуплеве тишкермелли хушма ĕçсем те пулаççĕ), изложени кĕреççĕ.

**1–4** классенче сочинени вĕрентмелле çеç çыртараççĕ. Чĕлхе тишкерĕвĕпе çыхăннă хушма ĕçсемпе пĕрле ирттернĕ çыру ĕçне икĕ паллăпа хаклаççĕ: пĕринпе – çырса илнишĕн, тепринпе – чĕлхе тишкерĕвĕшĕн.

2 класран пуçласа таса та илемлĕ çырассин хăнăхăвĕсене те тĕрĕслесех тăмалла. Хаклас критерисен шутне каллиграфин çак виçисем кĕреççĕ: саспаллисен ĕлкисене пăсмасăр, уçăмлăн, пĕр пек виçеллĕ чалăштарса çырни, вĕсен çъллĕшĕ тан пулни, йĕрсен хулăнăшĕ, саспаллисем сăмахсем хушшинчи хушă, пĕр пекки, яланах пĕрешкел

тата çителĕклĕ хăвăртлăхпа çырни.

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан ĕçĕ каллиграфи нормисене тивĕçтерет, çырура пĕр-икĕ пысăках мар çитменлĕх пулма пултарать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача çырăвĕ виăçесенчен пĕрне тивĕçтермест (пĕрешкел чалăштарса çырман, саспаллисем, сăмахсем хушшинче пĕр пеклĕх çук т.ыт.те), 1–2 пысăках мар çитменлĕх пур.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен çырăвĕ каллиграфи виçисенчен 1–2-шне тивĕçтереймест (саспаллисене пĕрешкел чалăштарманни, хăш-пĕр саспаллисен ĕлки уçăмлах марри, саспаллисен çӳллĕшĕпе хулăнăшĕ пĕрешкел марри т.ыт.те), 1–2 пысăках мар çитменлĕх пур.

**«2» паллă ăакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан çырăвĕ каллиграфи виçисенчен чылайăшне тивĕçтермест.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен çырăвĕ питĕ тăрлавсăр, илемлĕ мар, унта търлетнĕ, таса мар вырăнсем нумай.

Пысăках мар йăнăшсем шутне çаксем кĕреççĕ:

1) хăш-пĕр саспаллисене тĕрĕс мар çырни;
2) пысăк тата пĕчĕк саспаллисене пĕр йĕр ăинче çырманни;
3) хăш-пĕр саспаллисене тĕрĕс çыхăнтарманни;
4) йĕртен çълелле е аялалла тухса çырни;
5) ытлашши шултра е вĕтĕ çырни;
6) хăш-пĕр тĕлте саспаллисене пĕрешкел чалăштарса çырманни, саспаллисем, сăмахсем хушшинчи хушă пĕр пек пулманни;
7) хăш-пĕр саспаллисен тăрринчи паллăсене, çекĕлсене пăсса çырни.

Ача тунă чылай йăнăш ӳт-пӳ аталанăвĕпе çыхăннă пулсан, япăхрах çырнă ĕçе «3» паллăпа хакламалла.

Ку виçесемпе 2 класра таса та илемлĕ çырмалли уроксенче пурнăçланă ĕçсене тата **2–4** классенче ятарласа ирттернĕ тĕрĕслев ĕçĕсене хаклаççĕ. Чăваш чĕлхи урокĕсенче таса та илемлĕ ăырма вĕренмелли минутсенче ирттернĕ пĕчĕк ĕçсене ятарлă паллăсемпе хакламаççĕ.

**Тĕрĕслев ĕçĕсене** вăл е ку темăна вĕреннĕ май е вĕренсе пĕтерсен ирттереççĕ. Вĕсен шучĕ темăна вĕренес йывăрлăхран килет. Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕăĕсене ытларах вĕренъ чĕрĕкĕ, çурçулĕ вĕçĕнче ирттереççĕ.

## 2-4 классенче диктанта çак виçесемпе хакламалла:

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача орфографипе пунктуации йăнăшĕсем пачах туман, орфограммăсене тӳрлетмен, каллиграфии виçисене пăхăнса (саспаллисен ĕлкисене уçăмлă, пĕрешкел чалăштарса т.ыт.те) çырнă, анчах уйрăм çитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă саспаллисене кĕртсе лартни, саспалли ĕлкине тӳрлетни т.ыт.те) пур пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** çыру ĕçĕнче орфографи йăн-шĕсем 2, пунктуации йăнăшĕ 1 ытла маар, е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейлĕ çырнă, анчах темиçе çĕрте каллиграфии виçисене тивĕçтермен, пĕрĕпĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** орфографипе пунктуации йăнăшĕсем 6-ран ытла маар, диктантра (вариантсем) орфографи йăнăшĕсем 3-рен 5-е çити, пунктуации йăнăшĕсем 3 таран, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнса çырман тата тĕрлĕ орфограммăна тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** диктантра орфографи йăнăшĕсем 6, пунктуации йăнăшĕ 3-4-ран ытла, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнмасăр çырнă, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**«1» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** ҫыру ĕҫĕнче орфографи йăнăшĕсем 8-тан, пунктуации йăнăшĕсем 5-рен ытла, тӳрлетни чылай пулсан.

**Диктантра ҫаксене йăнăш тесе шутламалла:**
а) сăмаха орфографи правилисене пăсса ҫырни, саспаллисене сиктерсе хăварни, саспаллисене е сăмах сыпăкĕсене ылмаштарса лартни, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарни;
ă) вĕреннĕ правилăсене пĕлменнипе чарăну пали лартман е тĕрĕс мар лартнă пулсан.

**Диктантра ҫаксем йăнăш шутланмаҫҫĕ:**
а) ку таранччен вĕренмен орфографи тата пунктуации правилисемпе ҫыхăннă йăнăшсем (кун пек сăмахсене класс хăми ҫине ҫырса кăтартмалла);
ă) предложени вĕҫĕнче пĕр хутчен пăнчă лартмасăр хăвартнă, тепĕр предложени пуҫламăшне пысăк саспаллипе ҫырнă пулсан;
б) текст шухăшне улăштармасăр пĕр сăмах вырăнне тепĕр сăмах улăштарса ҫырнă пĕр тĕслĕх кăна пулсан.

**Ҫаксене пĕр йăнăш тесе шутламалла:**
а) тĕрĕс мар ҫырнă сăмах икĕ е темиҫе хутчен тĕл пулсан, ҫав правилăпа ҫыхăннă йăнăша тепĕр сăмахра та тунă пулсан, вĕсене пĕр йăнăш тесе шутламалла;
ă) пысăках маар 2 ҫитменлĕхе (кăлтăка) пĕр йăнăш тесе шутламалла.

**Ҫаксене пысăках маар ҫитменлĕхсем (кăлтăксем) шутланаҫҫĕ:** а) сăмахра пĕр саспаллинех асăрхамасăр икĕ хут ҫырни (*паяян, ыраан* т.ыт.те); ă) сăмаха ҫырса пĕтерейменни (*кăранта…, кĕнек…* т.ыт.те);
б) пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куҫарнă чухне сăмахăн пĕр пайне асăрхамасăр пăрахса хăварни (*кĕ(не)-ке, те(ле)-фон* т.ыт.те);
в) предложенире пĕр сăмахах икĕ хут ҫырни.

**Пуплев тишкерĕвне хакламалли виҫесем**
Чĕлхе тишкерĕвĕ евĕрлĕ тĕрĕслев ĕҫĕсене хакланă чухне ҫак виҫесемпе усă курмалла:
**«5» паллă** ача ĕҫĕ пĕр йăнăшсăр пулсан, вăл терминсемпе правилăсене лайăх пĕлни тата хăй пĕлĕвĕпе тĕрлĕ йышши ĕҫсем тунă чухне усă курма пултарни палăрсан лартмалла.
**«4» паллă** ача терминсемпе правилăсене лайăх пĕлсен, вĕсемпе грамматика тишкерĕвĕ тунă чухне пĕлсе усă курсан, сăмахсемпе предложенисене тишкерес ĕҫĕн ¾ пайне тусан лартмалла.
**«3» паллă** ача вĕреннĕ материала ăнланни палăрсан, хăй пĕлнипе усă курса тишкерĕвĕн ҫуррине пурнăҫласан лартмалла.
**«2» паллă** ача вĕреннĕ материала начар пĕлсен, вăл «3» паллă илмелĕх хуравламасан е пуплев тишкерĕвĕн ытларахăш пайне пурнăҫлаймасан лартмалла.
**«1» паллă** ача пуплев тишкерĕвне пачах пурнăҫламасан лартмалла
**Пĕтĕмĕшле илсен, изложенипе сочинение II-IVклассенче ҫапла хакламалла:**
**«5» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакăн пек йĕркеленĕшĕн лартмалла: автор текстне тĕрĕс тата ҫыхăнуллă ҫырса кăтартнă (изложени), шухăш темăпа килĕшӳллĕн, ҫыхăнуллăн аталанса пырать, факт йăнăшĕсем ҫук, сăмах йышĕ пуян, пуплев тĕлĕшĕнчен текста тĕрĕс те палăртуллă хайланă пулсан.
<u>Тĕрĕс ҫырнăшăн</u>: орфографипе пунктуации йăнăшĕсем ҫук, 1-2 тӳрлетни пулма пултарать.
**«4» паллă** шухăшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакăн пек йĕркеленĕшĕн лартмалла: автор текста ҫителĕклĕ таран туллин ҫырса кăтартман (изложени), темăна уҫса панă, анчах уйрăм вырăнсенче шухăш ҫыхăнăвĕ татăлса кайни, тĕрĕсех маар ҫырни тата пуплев ҫитменлĕхĕсем пур. Пуплев тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпе 3 йăнăшран ытла маар, содержанипе тунă йăнăшсем 3 таран тунă пулсан.
<u>Тĕрĕс ҫырнăшăн:</u> 2 орфографи, 1 пунктуации йăнăшĕнчен ытла мар е 1 орфографи, пунктуаци йăнăшĕ тунă, пĕр-пĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан. (Вĕреннĕ

правиласемпе тунӑ йӑнӑшсене ҫеҫ шутламалла)

**«3» паллӑ** шухӑшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакӑн пек йӗркеленӗшӗн: автор текстӗнчен кӑштах пӑрӑннӑ (изложени), темӑпа килӗшӳллӗ тата ҫыхӑнуллӑ ҫырман, 2-3 предложение тӗрӗсех йӗркелеймен, сӑмах йышӗ чухӑн, пуплев тӗлӗшӗнчен ҫитменлӗхсем пур, шухӑш аталанӑвӗнче (содержантре), текста йӗркелессинче тата пуплевре йӑнӑшсем пӗтӗмпе 5 таран пулсан.

<u>Тӗрӗс ҫырнӑшӑн:</u> 3-5 орфографи йӑнӑшӗ таран, вариантсем: 3 орфографи, 2-3 пунктуаци йӑнӑшӗ, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфорграфи, 1 пунктуации йӑнӑшӗ тунӑ, тӗрлӗ орфограммӑсене тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллӑ** шухӑшсемпе (содержанипе) пуплеве ҫакӑн пек йӗркеленӗшӗн: ӗҫе тема тӑрӑх ҫырман, автор текстӗнчен чылай пӑрӑнса кайнӑ (изложени), текста тӗрӗсех маар ӑнланнӑ вырӑнсем (факт йӑнӑшӗсем) пур, йӗркеллӗ, ҫыхӑнуллӑ ҫырман, уйрӑм пайсем хушшинче ҫыхӑнулӑх ҫук, сӑмах йышӗ чухӑн. Текста тата пуплеве йӗркелес енӗпе 6 ҫитменлӗхпе йӑнӑшсем пур пулсан.

<u>Тӗрӗс ҫырнӑшӑн:</u> орфографи йӑнӑшӗсем 3-4-ран ытла, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**«1» паллӑ** содержанипе пуплеве йӗркеленӗшӗн: автор текстне пачах ҫырса кӑтартман (изложени), пуплеве тата текста йӗркелес тӗлӗшпе 7 йӑнӑшран ытларах тунӑ.

<u>Тӗрӗс ҫырнӑшӑн:</u> 8 орфографи, 5 пунктуаци йӑнӑшӗсенчен ытла, 7 ҫӗрте тӳрлетни пур.

Изложенисемпе сочиненисенче хӑш йӑнӑшсем ҫитменлӗх (кӑлтӑк) шутланнине, пӗр йӑнӑш пулнине т.ыт.те диктанта хакланӑ чухнехи виҫесене шута илсе хакламалла.

**Асӑрхаттарни:** пултарулӑх ӗҫӗсене хакланӑ чухне таса та илемлӗ ҫырнине, калиграфи виҫисене еплерех пӑхӑннине (диктанта пахаланӑ чухнехи пекех) шута илсе хакламалл